Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Иван Мучи (Илларионов Иван Илларионович)

## Книга: Тавӑрпи

## Сказка: Тавӑрпи

Пин-пин ҫул авал, ни кай енче мар, ни мал енче мар – ҫак тавращрах хастар халӑх пурӑннӑ. Йышлӑ халӑхӑн тӑшманӗсем те чылай пулнӑ: кусҫа ҫӳрекен тӗрлӗрен йӑхсем хум хыҫҫӑн хум пек пыра-пыра тапӑнса канӑҫ паман вӗсене, анчах нихӑш тӑшмана та хастарсем парӑнман. Пӗрре ҫав хастарсем ҫине хура тӑшман вӑрҫӑпа пынӑ. Ӑна хирӗҫ кӗрешме пӗтӗм халӑх кар ҫӗкленнӗ. Мӗн чухлӗ юн юхнӑ, мӗн чухлӗ ҫын вилнӗ, анчах тӑшман вӑйӗ чакни палӑрман. Вӑрҫӑ тӑсӑлнӑҫемӗн халӑх курайманлӑхӗ ӳссех пынӑ. Ҫав ниҫта та шӑнӑҫайми курайманлӑх сывлӑшӗнче пӗр ҫемьере сӑмахпа каласа пама ҫук, хут ҫине ӳкерсе ҫырма ҫук хитре хӗр ача ҫуралнӑ.

Тӑшмана тавӑрас шухӑшпа пурӑнакан ашшӗ-амӑшӗ ӑна Тавӑрпи тесе ят панӑ. Хӗр ача кунран-кун ӳссе пырса ҫулталӑкранах чечек пек яштака пӳллӗ, ҫӗмӗрт пек хура куҫлӑ, эреветлӗ-теветлӗ сӑн-питлӗ хӗр пулса тӑнӑ. Анчах Тавӑрпи каччӑ ҫинчен шухӑшламан, вӑрҫӑри арҫынсене тӑрантарма апат-ҫимӗҫ ытларах туса парасшӑн ырми-канми ӗҫлесе пурӑннӑ.

Пӗррехинче, вӑрҫӑра аманнисен суранӗсене ҫыхма кайсан, тӑшман янӑ ухӑ сӑнни Тавӑрпин сылтӑм хулне амантнӑ, ҫапах вӑл хӑй ӗҫне пӑрахман.

Кайран, тепӗр сӑнӑ кӑкӑрӗнчен лексен, халран ӳксе аран-аран вӑрҫӑ хирӗнчен тухнӑ.

Шур-шур кулюкки шулап тӑрӑх кускалать, ик ҫунаттинчен юн юхать. Юн юхин те – вӗҫес тет, ҫитес ҫӗре ҫитес тет. Тавӑрпи те ҫавнашкал: суранӗ йывӑррине пӑхмасӑрах малалла туртӑннӑ, урса кайнӑ хура тӑшмана тавӑрасшӑн ҫуннӑ. «Камран пулӑшу курам, кама йӑлӑнса пӑхам?»

Тӗнчене пурӑнӑҫ ӑшши паракан Хӗвел кӑвак тӳпере ярӑнса ҫӳренине асӑрхасан кӗмӗл сасӑпа йӑлӑнма тытӑннӑ:

– «Ҫутӑ Хӗвел, ӑш Хӗвел, пулӑшсамччӗ эс мана хаяр тӑшмана тавӑрма!».

Сарӑ Хӗвел ылтӑн пайӑркисем витӗр хӑйӗн ӑшшине пӗтӗм тӗнче ҫине ытларах ярса ҫапла каланӑ:

– «Тавӑрпи хӗрӗм, эп Хӗвел-ҫке! Хӗвелӗн хӑй ӑшшине пурин ҫине те пӗр пекех ямалла».

– Эсӗ урӑх вӑйсемпе калаҫса пӑх. Тен, сана вӗсем пулӑшма пултарӗҫ». Тавӑрпи вара хӑйӗн умӗнче тӗкӗр пек ҫуталса выртан Шывпа инҫех мар шатӑртатса ҫунан Вута тархасласа пӑхнӑ:

– «Кӗмӗл Шывӑм! Ылтӑн Вутӑм! Пулӑшсамӑрччӗ мана хаяр та сӑхӑ тӑшмана ҫапса аркатма!»

– «Чипер хӗрӗм Тавӑрпи, сана пулӑшма эпир хатӗр каҫ та ир. Мӗскер тума хушан?» – тенӗ Вутпа Шыв иккӗшӗ те пӗр харӑс.

– Каласамӑрччӗ малтанах, хӑшӗ сиртен вӑйлӑрах?» – ыйтнӑ Тавӑрпи.

– «Шывах вӑйлӑ, Шыв вӑйлӑ, анчах унтан вӑйли эпӗ пур!» – тенӗ шатӑртатса Вучӗ.

– «Вутах вӑйлӑ, Вут вӑйлӑ, унтан вӑйли эпӗ пур!» – тенӗ карласа Шывӗ.

Тавлашсан-тавлашсан Вут тата ытларах шатӑртатса ҫунма тытӑннӑ, патне пыма май пулман. Шыв кӗрлесе юхса килнӗ те – асар-писер вӑйлӑ кӗрешӳ пуҫланса кайнӑ. Кӗрлеттерсе-кӗрлесе, ҫатӑртатса-ҫатлатса, шатӑртатса-шартлатса ҫунать Вут. Шывӗ чашлатса та чӑшлатса, кӗрлесе те карласа, шарлаттарса-шӑтӑртатса ҫупать Вута. Кӗрешӳ вӑйланнӑҫемӗн вӑйланса пынӑ.

Вут ывӑна пуҫланӑ, тар тапса тухнӑ унӑн. Шывӗ пӗҫертекен Вута хирӗҫ кӗрешнӗҫемӗн вӗриленсех пырса вӗремех кӗнӗ те вӗренӗҫемӗн хухсах тӑнӑ. Юлашкинчен Шывӗ Вута ҫӗнтернӗ. Вут аран кӑна чул хушшине пытанса юлнӑ. Вара ҫавӑнтах вут чулӗ пулнӑ. Шыв хухнӑ вырӑна юлнӑ Вут тарӗ сивӗнсе пӗркеленсех ларнӑ.

– «Вут тарĕ... Ăна чĕртсе пăхсан мĕнле-ши? Вут пекех çунĕ-ши?» – тесе Тавăрпи пĕр чĕптĕмне илсе чул çине хунă та Шывран пытанса ларнă Вута чул хушшинчен тухма хушнă. Вучĕ тухман. Тух тесе те тухманшăн Тавăрпи чула хытă япалапа çапнă та – вут чулĕнчен хĕм тухса чĕптĕм тар çине ӳкнĕ. Тарĕ хыпса илнĕ, çӳлелле паш! сикнĕ. «Акă ăçта вăл Тăван çĕршыва тапăнакансене çунтармалли вут-çулăм!» – Тавăрпи пичĕ çинче савăнăç палăрнă.

Вутпа çапăçнă чухне вĕреме кĕнĕ Шыври чĕр чунсем пиçсе кайнă. Шыв çине вĕсен ирĕлнĕ çăвĕ тухнă. Хайхи туртса ыратакан сурана çав шывпа сĕрсе пăхсан Тавăрпи суранĕ лăшах пулнă, юсаннă.

«Ара, ку сиплĕ Шыв-çке!.. Чĕрĕлĕх Шывĕ. Кунпа вăрçăра аманнисене сыватма пулать», – тата та ытларах хĕпĕртесе каять кăвар чĕреллĕ хĕр, çавăнтах хăй халăхне кун пирки пĕлтерме хăвăртрах чупать. Вара хастарсем Вутпа кĕрешнĕ Шыв хĕррине аманнисене илсе пыраççĕ те сыватса яраççĕ.

Вут тарĕпе тăшмансене ăшалантарма пикенеççĕ – чылайăшне вĕлерсе пĕтереççĕ.

Çапах та çиччĕшĕ тарса хăтăлаççĕ. Çакна пĕлсен Тавăрпи тарăхса кайнă.

– «Тăшман, ан савăн! Пурĕпĕр тупатăп: тĕнче хĕррине тарса ӳксен те, çĕр тĕпне ансан та, юман хăвăлĕнче пытансан та, шыва кĕрсен те тупатăпах сана, тĕп тăватăпах!» – тенĕ те ваттисенчен пил илсе вăрăм çула тухса кайнă. Хăйпе пĕрле пĕр çĕклем тар илнĕ. Эрне утнă, уйăх... Çич эрнерен пĕр тĕттĕм каç тăшман аллине лекнĕ. Çичĕ çынна хирĕç Тавăрпи вилес пек кĕрешнĕ. Анчах ăçтан çĕнтерĕн вĕсене, çиччĕшĕ те арçынсем-çке, вăйлă этемсем. Тарпа усă курнă пулсан тен... Анчах унпа усă курма ĕлкĕреймен-çке Тавăрпи. Хулăн пĕлĕт айĕнчен шăвăнса тухнă тулли Уйăх çичĕ çынна хирĕç юнлă шăпăр-шăпăр тар тапса тухиччен-ех кĕрешекен Тавăрпи çине ăшшăн пăхса тăнă. Хĕр вара ал вĕççĕн кĕрешнипе çичĕ çынна çĕнтерес çуккине кура йăлăнса каланă:

– «Тăван çĕршыв тăшманĕнчен мăшкăл куриччен мана Уйăх хăй патне илинччĕ!» – тенĕ.

Çапла каласа пĕтернĕ-пĕтермен чипер хĕр Тавăрпи çĕклемĕ-мĕнĕпех çĕртен уйрăлса çӳлелле хăпарма тытăннă, çичĕ хутлă пĕлĕт витĕр: кăвак пĕлĕт, çил пĕлĕчĕ, шур пĕлĕт, çумăр пĕлĕчĕ, тăм пĕлĕчĕ, юр пĕлĕчĕ, пăр пĕлĕчĕ витĕр тухса Уйăх çине пырса тăнă. Çапла вара çутă Уйăх ăна хăй патне илнĕ... Тулли уйăх çине пăхсан чипер хĕр тăнине куратăр. Çав хĕр – Тăван çĕршыва тапăнакан тăшмана тавăрма хушакан Тавăрпи пулать.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.